# «Шурă акăшпа» «Ту арăсланě»

Наци библиотекинче Иван Яковлев çуралнăранпа 170 çул çитнине халалласа литературăпа музыка хайлавěсен «Чăваш Ене мухтаса» конкурс фестивале иртрě.



Вера АРХИПОВА архивěнчи сăн ÿкерчěк.

Ача-пăчапа çамрăксен форуме хамăр тăрăхри, Раççей регионěсенчи тата чикě леш енчи сăмах, сцена ăстисене пуçтарчě. Чехирен, Кенирен, Камерунран, Узбекистанран, Кăркăсстанран, Анголăран, Конгăран килнисем хăйсен ăсталăхне кăтартрěç.

Конкурсантсем сцена çине тěрлě наци культурипе çыхăннă ěçсемпе тухрěç пулин те Иван Яковлев тěп тема, сăнар пулчě. Ачасем унăн юмахěсене пăхмасăр каларěç, Иван Яковлевăн «Манăн пурнăç» аса илěвě, Юхма Мишшин, Геннадий Волковăн Патриарх çинчен çырнă кěнекисем тăрăх хатěрленě спектакль сыпăкěсене вылярěç.

Ку ěçе сывлăх енчен хавшак ачасен те хутшăнма май пулчě. Вěсем те малти вырăнсене йышăнчěç.

Фестивальте конкурсантсем хăйсем тěнчен пěр пайě пулнине çирěплетрěç. И.Ульянов ячěллě Чăваш патшалăх университечěн тата Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийěн студенчěсем тěрлě чěлхепе калаçакансене туслăх çыхăнтарнине ěнентерчěç.

Энн Асиф Мутсач /Кени/ суахили чěлхипе чăваш алфавичěпе паллаштарчě. Мари Альберт Авусса /Камерун/ тěнчене çырнă çырăвне вуларě. Элдорбек Собиржон Набиев угли /Узбекистан/ тата Мукаш кызы Айжамал /Кăркăсстан/ «Шурă акăш» тата «Ту арăсланě» çинчен юрларěç. Уявра çавнашкалах Антон Асламасăн /Чехи/ тата Любовь Бушуевăн музыка хайлавěсем янăрарěç.

**Вера АРХИПОВА,**
**Любовь БУШУЕВА.**